# ПАТТĂР ÇАПУК

В. АЛАКĔР

АЂАПĂЂА
ТЕАТТĂРĔ
ВАԒԒИ
ÇЫРНĂ
6 КАРТТИНЛĂ
ПЙЕССĂ

Хакĕ 22 пус

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар — 1931 çул

АЛАКĔР ВАÇЛЕЙĔ

# ПАТТĂР ÇАПУК

АЂАПĂЂА ТЕАТТĂРĔ ВАЂЂИ
ÇЫРНĂ 6 КАРТТИНЛĂ ПЙЕССĂ

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР ★ 1931

Отпечатано
в типографии № 1
ЧУВАШГОСИЗДАТА
Чувашлит № 1121
Заказ № 2410
Тираж 2.000 экз.
$1^1/_2$ п. л.

## ВЫЛЂАКАНСЕМ:

ÇИТĂР—ђухăн хресђен. Кулаксене пăхă-накансҝер.

МАРИНЕ—унăн арăмĕ.

ÇАПУК—вĕсен ађи. Пионер.

МИРУН ЙĂВАНЂЂĂ } Йал кулакĕсем.
МАКАР КЕРАÇАМЂ }

ЂАНУК—Мирун ађи.

ХĔЛИП—Макар ађи.

ЙАКУР—Патрак—комсомолĕс. Kaђђă.

ВЕХТĔР Йакур йулташĕ. Комсомолĕс.

КАВĔРЛЕ—Çитăр тусĕ. Çитăрпа пĕр шухăшлăскер.

## 1-мĕш КАРТТИН.

Пралук. Çатан карта çумĕнҫе пĕренесем купаланса выртаççĕ. Çатан карта хыçĕнҫе пахҫа. Йăвăçсем, сарай çунаттисем курăнаççĕ. Хĕвел анас умĕн. Çапук хытă ҫупса тухса пĕренесем хыçне пытанаŧ. Паусă. Кăшт тăрсан Çапук выртнă вырăна кирпĕҫ татăкĕсем пырса ӳкеççĕ. Хĕлиппе Ҫанук ҫупса кĕреççĕ.

ХĔЛИП. Ак çакăнталлах ҫупса килҫĕ вăл.

ҪАНУК. Пĕр те пĕр тытсан лайăх ислететпĕрха (ш ы р а ŧ. Ç а п у к р а н а й а к р а в ы р т а к а н п ĕ р е н е с е м х ы ç н е п ă х а ŧ).

ХĔЛИП. Çавна мах паратпăри вара. Тарман пулсан...

ҪАНУК. Хытă ҫупаŧ тата есрелĕ аҫи, шуйтан лаҫах.

ХĔЛИП. Шыраха, шыра.

ҪАНУК. Епĕ паçăртанпах шыратăп, есĕ ху шыраса пăхха. (Ш ы р а ç ç ĕ. П а у с ă). Ăçта мура тарса пытаннăха вăл?

ХĔЛИП. Итлеха, Ҫанук, Йухха-кассинелле каймани вăл?

ҪАНУК. Самăй çакăнтах пек туйăнҫĕ мана.

ХĔЛИП. Айукка, епĕ урăх шырамастăп... хырăм выçса карĕ ман.

ТАНУК. Есӗ шырамастӑн пулсан, епӗ те... Ман пӗттенех шырамаллаим...

ХӖЛИП. Маншӑн мар, саншӑн, сирӗн ҫӗмӗрт сапакине татрӗ вӑл.

ТАНУК. Епӗ ӑна ҫынӑнне тивме вӗрентем... Тепре курсан...

ХӖЛИП. Ҫӗмӗрт теттеккин шӑршине пӗлет тата усал.

ТАНУК. Айта киле.

ХӖЛИП. Аӑта.

ТАНУК (Хӗлипе кӗпе ҫаннинтен тытса). Тӑхтаха, акӑ мӗн. Ҫапук клупа ҫӳренӗ тухне йаланах пирӗн умран иртсе ҫӳрет. Пастайха, пурпӗрех сӑмсине ҫапса кататӑп.

ХӖЛИП. Айта.

ТАНУК. Айта еппин.

Инҫетре: Хӗлип, Хӗлип! апат ҫиме, есрелӗ атн!— тесе кӑшкӑрнӑ сасӑ илтӗнет. Танукпа Хӗлип васкаса тупса кайаҫҫӗ. Паусӑ. Ҫапук пӗрене хыҫӗнтен пуҫне ҫӗклесе тавралла пӑхкалаӑ. Сасӑсем ҫывхарнине илтсе, каллех пытанаӑ.

ҪАПУК (тӗтрекен сассипе шӑппӑн). Кайман...

Мирунпа Макар калаҫса пырса кӗреҫҫӗ.

МАКАР. Тавайха, тӗл пулнӑ пек тухне ларсах калаҫар, Мирун Йӑвантӑ.

МИРУН. Калаҫӑпӑр, ма калаҫас мар.

МАКАР. Ҫитменнине улах тата кунта.

МИРУН. Ҫав аван (кӑсйисентен тӗлӗмӗсене кӑларса тивретсе туртаҫҫӗ. Ҫапук пытанса выртакан пӗренесем ҫине ларaҫҫӗ).

МАКАР. Шалт аптраса ҫитрĕм, Мирун Йăванҫҫă... Пурнăҫ кашни куллен савăлпа ҫапса хĕстернĕ пек хĕсĕнсе пыраŤ. Сывлама ирĕк памаҫҫĕ аҫаҫапманскерсем. Пăвмаллипех пăваҫҫĕ. Хаљ ак тата йалта колхос тăвасси ҫинҫен каласкалама пуҫларĕҫ. Теплерен колхос тусан, пĕтрĕ пуҫ. Пушшех кансĕр пулаŤ. (Ҫ ĕ л ĕ м т ĕ т ĕ м н е ҫ ă р а л а т с а к ă л а р а - к ă л а р а й а р а Ť).

МИРУН. Ара, хаљ самани ҫавнашкал (т а р ă х с а). Кашни йуха сăмса влаҫ...

МАКАР. Ҫапла ҫав... Ак ман патра тарҫăра пурăннăскер, ара леш Йакур, ҫав пăтратаŤ. Таҫта ҫăва патĕнҫен хулана кайса вĕренкелесе килҫĕ те, пĕтерет ĕнтĕ... Ытлашши ăслăланса кайнă есрелĕ...

МИРУН. Ҫавнашкал кара ҫăварсене мăкласа лартмалла. Етеми вăл, унтан ĕмĕрне ҫын пулас ҫук... Ҫитерсен ҫимест, ĕҫтерсен ĕҫмест, ҫисти аптрамалла...

МАКАР. Усала ним тума ҫук. (С а с а р т ă к). Астуха, виҫмине ҫак вăхăтра колхос тăвас тĕлĕшпе пуху пулмалла. Йакур токлат тăваŤ, пирĕн те хатĕрленес пулаŤ. Ҫав Ҫитăра, Шăлйанах Йăкăнатне тата Кавĕрлене ҫĕнсе ĕҫтерес пĕрре... Упаленсе ҫÿреҫҫĕр. Пухура ҫавсем лайăхрах кăшкăрсан халăх шăпах пулаканҫҫĕ...

МИРУН (с а в ă н ă ҫ л ă н). Ҫăнах та (ш у х ă ш а к а й с а). Ĕҫ тухмасан?..

МАКАР. Ĕҫ тухмасан?... Ĕҫ тухмасан... ĕҫ тухмасан... (ш у х ă ш л а Ť).

МИРУН. Ĕҫ тухмасан ҫав.

МАКАР. Ёҫ тухмасан вара, шăнтмалли кăна йулаť. Хăвах шухăшласа пăхха. Йалта Йакур пулмасан никам та пěр сăмах шарлас ҫук... ҫав кăна пăтратаť.

МИРУН. Шăнтасси ҫăмăл ёҫ мар, маň килмесен хамăра та шăнтма пултарěҫ... Шикленетěп епě...

Ҫапук йерипен пуҫне ҫěклесе пăхаť те каллех ђикет. Тěттěмленет.

МАКАР. Ыр ҫынна шăнтас пулсан, апла калама йураť. Ку ҫын мар, йытă. Йытă итту шăмă пăрахса парсан хыпаť, ку...

МИРУН. Ун ҫинђен халех калаҫас мар, каňран куҫ курě.

МАКАР. Калаҫса татăлас пулаť, каňран малтан сăмах ан пултăр. Виҫмине пуху, ёҫ тухмасан тепěр каҫхинех маňлаштарас пулаť. Вăрăма тăсса йарсан пулмарě вара. Халђ калаҫса татăлар, каňран вара, ёҫ тухати, тухмасти, куҫ курě. Йакур ҫук пулсан тепре сывлăш ҫавăратђен пурăнатпăр вара. Халăха хамăр алăра тытмалла, ђăмăртаса тытмалла.

МИРУН. Шеллесси ђăпахах та кирлě мар, вăл пире ку таранђђен ђылаň хурлăх кăтартрě. Налук, самооплошени, тырпул хатěрлес кампани иртерне ђухне хěсмеллипех хěсрě. Мěн пур ёҫре те ҫавă...

МАКАР. Итлеха, (ш ă п п ă н) вăл ăҫта сывăрса пурăннине пěлместěн ес?.. Ҫамрăксем тулта ҫывăракан.

МИРУН. Пастаňха, пастаň,.. Пěр кун анкар-

ти хыçне анасем пăхма кайсан... (Ç а п у к ĕ с ĕ р е т) Мĕн ђĕмери ку?

МАКАР. Темскер, ђипђиперех ÿсĕрнĕ пек туйăнђĕ.

МИРУН (т а в р а л л а п ă х к а л а с а). Кунта никам та çукçке, (с а с а р т ă к) е-е... вĕç çав сурăх пулмалла вăл?

МАКАР. Есрелĕ сурăххи, хăратсах пăрахрĕ (а л л и п е с у л а т̆). Ђăпа, ђăпа!..

МИРУН. Ђăпа, есрелĕ... (п у ç л а н ă х а л а п а т ă с с а). Анасем пăхма кайсан курсађђĕ епĕ. Çтаппансен йенђи сарай çумĕнђе Вехтĕрпе иккĕшĕ кĕнекесемпе аппаланса ларађђĕç.

МАКАР. Апла пулсан аван, анкарти хыçĕпе кайса йашлаттармалла çеç... Такам пусса кайнă, никам та пĕлес çук.

МИРУН. Иксĕмĕр пĕрле вара...

МАКАР. Конешнă пĕрле, саншăн кăна мар, иксĕмĕрĕншĕн те... Виçмине каç пухура ĕç тухмасан, тăватмине ман патра.

МИРУН. Йурĕ.

МАКАР. Смотри, ку ĕç çинђен арăму, ађупăђу, никама та ан пĕлтер. Кам та пулин сиссен, пĕтрĕмĕр...

МИРУН. Каламасăрах пĕлетĕпçке.

Калаçнă сасăсем çывхарса пыни илтĕнет.

МИРУН (М а к а р а т ĕ р т с е). Ат̆а, кайăпăр, çынсем килеççĕ. Темĕн шухăшлама пултарĕç тата.

МАКАР. Çапла вара, (у р а ç и н е т ă р а т̆) вĕçтер (т у х с а к а й а ç ç ĕ).

Çапук пуçне кăларса пăхкалаť. Çитăрпа Кавĕрле пынине курсан каллех пытанаť. Çитăрпа Кавĕрле кĕреççĕ. Каç тĕттĕмленсех пыраť.

ÇИТĂР (пуçланă халапа тăсса). Çиме çăкри çук, çийе тăхăнма тумтирĕ, вĕсем колхос. Колхоссăрах выçса вилетпĕр. Пур çук тырпула пуçтаркаласа аран, аран кăштăртаткаласа пурăнкалатпăр, вĕсем пире пуçсене тата шаларах ђиктересшĕн. Ухмах марха (ђарăнса тăраť).

КАВĔРЛЕ. Клавнăй ĕçкĕ, ĕçкĕ тĕлĕшĕнђен йапăх пулаť. Унта кĕрсен вара Мирун Йăванђђăпа Макар Кераçăмђран пĕр тăмлам та ан кĕт. Хаљ латнă халăх çинђе ытларах кăшкăркаланăшăн сыптаркалаççĕ.

ÇИТĂР. Ун ђухне вара Йакурсăр пуçне пĕр утăм та малалла йарса пусма ан шухăшла. Тула тухас пулсан та, унтан ыйтмасăр ан тух. Ђарма шухăшлĕ, а? ха-ха-ха.

КАВĔРЛЕ (иккĕшĕ те утса тухса кайса). Ђăн та, ес калашлĕ ђарма шухăшлĕ, ха-хаха (кулса тухса кайаççĕ).

Сасăсем илтĕнми пулсан, Çапук пуçне кăларса ђылайђђен тавралла пăхкалаť. Никам та çуккине кура тухаť.

ÇАПУК (курса ларакан ађасенђен ыйтса). Кунта урăх никам та çуки? Пытанса лармани вĕсем?.. Тавралла лайăхрах пăхкалăрха, Ђанукпа Хĕлип мана сыхламаççĕи? (курса ларакансем «çук, çук, пăçăрах карĕç»—тесе ответ панă хыççăн). Çук пулсан йураť (уççăн сывласа йарса). Ах,

хăрарăмçке... Ђанукпа Хĕлип ытла та усал ађасем, ашшĕсем те уçал. Йакур пиђђене так ахаљ пустуйранах вĕлересшĕн. Епĕ мĕн пурри те пĕр ђеђекне анђах татса илтĕм, хăйсем кашни куллен туратти тураттипех хуçаççĕ (хăйне хăй савăннă пек пулса). Ах, хамăрăн çĕмĕрт йăвăççи пуластăк, епĕ çĕмĕрт çуккисене кашнине пĕрер сапака татса параттăм... Йакур пиђђене самăй пысăк сапакне (шухăшласа), ах, çав Йакур пиђђе ытла та аван çын, хăй пысăк çын пулсан та пирĕнпе выљама йуратаť.

Инçетре: Çапук, Çапук, ах есрел ађи, сана шырани пайан,—тенĕ сăмах çывхарса килет.

ÇАПУК (кăрт сиксе). Анне! (хăраса) каллех хăлхаран туртаť ĕнтĕ...

Марине хыпăнса кĕрет.

МАРИНЕ (çуйăхса). Кунтаңçха ес, есрелĕ ађи, епĕ пур ђунтан хыпаланса шыраса çӳретĕп. Ђисти пăшăхрăм. Ах, ђĕре... (Çапука). Килха, килха кунтарах, епĕ сана аннӳ ăшђикне вăркаттарма вĕрентем.

ÇАПУК (хăраса амăшĕ патне пырса). Анне, анне, епĕ... (йăлăнса). Ах, ан тивха, анне... епĕ, епĕ... хăрарăмçке...

МАРИНЕ (Çапука хăлхинђен йарса тытса). А-а, ес калаçса тăма, аппӳна хирĕç тăратăни?.. Епĕ сана вĕрентем, ђупкăн, лиска йытă (хăлхинђен çавăтса илсе тухса кайаť). Ут, ут, ут шуйттан ађи! Ут пиңанер!

ÇАПУК (йĕрсе йарас пек). Ах, ах, ан-

не... анне!.. (йӗрет). Ан тивха!.. (тухса кайаҫҫӗ).

Пӗђӗк паусӑ. Йакурпа Вехтӗр кӗреҫҫӗ. Йакурӑн хулхушшинђе хаҫатсем.

ЙАКУР Ҫапла вара, епӗ ыран хулара пулатӑп, унта пӗр кайсан. ђасах ҫавӑрӑнса тухма ҫук. Ытлах нумай пурӑнсан та виҫминеђђен пур-пӗр тавӑрӑнатӑп. Есӗ унђђен кунта комсомолӗссемпе ђухӑнсене колхос ҫинђен каласа ӑнлантарас тӗлӗшпе ӗҫле, епӗ хам ӗҫе хамах майлаштаркалӑп.

ВЕХТӖР. Маншӑн ан кулђан ес, епӗ хам вӑй ҫитнӗ таран тӑрӑшатӑп. (Сасартӑк аса илсе). Астуман та, есӗ леш ђлен пилеђӗсене илсе килме ан манха, кашни куллен аптратаҫҫӗ...

ЙАКУР (Вехтӗр хулпуҫҫи ҫине аллине хурса). Мирунпа Макартан кӑшт сыхланарах ҫӳре. Вӗсенђен ыррине кӗтме ҫук, тем шухӑшлӑ ҫынсем... Леш ђлен пилеђӗсем ҫинђен ан та шухӑшла, илсе килетӗп. Май килсен пионерсене валђђи те куђђенеҫ илсе килме шухӑш пурха.

ВЕХТӖР. Ҫитӗ ӗнтӗ, еп унталла, ес кунталла (алине парса). Сывӑ пул, ђипер ҫитсе кил еппин.

ЙАКУР. Йурӗ еппин. Кайса ҫывӑрас (уйӑрӑлса иккӗшӗ ик йенелле кайаҫҫӗ. Стсенӑ ҫинђен тухса кайас умӗн Вехтӗр Йакура ђӗнсе ђарать).

ВЕХТӖР. Есӗ леш Рапфак пирки ыйтса пӗлха унта, мӗнле, ӗҫ тухаїши?

ЙАКУР. Йурĕ (у т а т̆).

ВЕХТĔР. Ђимха, ђим, кĕнеке макаçăнне кĕрсе политкрамăттă кĕнеки ыйтса пăхха, тен пур. Пулсан илсех кил, укçине кайран, тавăрăнсан та парăпçке.

ЙАКУР. Пулсан, укçишĕн ĕç тăмĕ, ну сывă пул!

Иккĕшĕ ик йенелле кайса çухалаççĕ.

Ђаршав.

## II-мĕш КАРТТИН.

Ђухăн хресђен пўрђĕ. Марине ђашăк-тирĕксем çăват̆. Çапук кĕнеке вулат̆. Пўрт алăкĕпе ђўређесем уçă.

ÇАПУК. Анне, ах хырăм выçрĕçке. Атте тахçан килет...

МАРИНЕ. Хырăм шуђĕ анђах, кăнтăрла çеç улма шўрпи пĕçерсе çитертĕмçке, мĕнле пўтсĕр хырăм вăл сан? (Х ă й ă с с ĕ н). Аптрамалла ку ађапăђапа...

ÇАПУК. Çитермесен çимĕнçке, ан йатлаç, анне (к ĕ н е к е в у л а т̆). Пат-ра-ракпа, пат-ракпа, патракпа, патракпа... ђу-х-хăн-па, ђу-хăнпа, ђухăнпа, вă-т-ам, вăтам, вăтам х-хре-сђ-хресђ-ен-с-ем хресђенсем п-у-р-те, пурте, кол-хоса кол-хоса, колхоса. Патракпа, ђухăнпа вăтам хресђенсем пурте колхоса. (Х ă й ă с с ĕ н). Кĕнеке çине те Йакур пиђђе каланă пекех çырнăçке. Йакур пиђђе тĕрĕс калат̆.

Урамра пуху. Шавланă сасăсем илтĕнеççĕ. Çапук кĕнекене пăрахса ђўређе патне ђупса пырса итлесе тăрат̆.

1-мĕш САСĂ. Калаçаттăр çав кирлĕ мара, каҫакусене кӳлсе сухалас теттĕрим?..

2-мĕш САСĂ. Мирунпа Макар пулас мартăк выçах вилеттĕмĕр...

3-мĕш САСĂ. Кирлĕ мар, хутшăнмастăп.

1-мĕш САСĂ. Ара, ĕлĕкрен асаттесем, аттесем ертелсĕрех пурăннă.

3-мĕш САСĂ. Кирлĕ мар, хутшăнмастăп.

2-мĕш САСĂ. Макарпа Мируна спаççипă калас пулаŤ.

ÇАПУК (хыпăнса). Анне, анне, итлеха, анне, пирĕн атте те колхоса хирĕç тăраŤ. Епĕр ҫухăн вĕт, ҫухăнсен колхоса кĕмелле. Кĕнеке çинҫе çапла çырнă, суймастăп, анне, акă итле (кĕнекине алла илсе уçаŤ), вуласа парам (вулама тытăнаŤ).

МАРИНЕ (вулама ирĕк памасăр). Ах, шуйттан аҫипăҫи, миçе каланă сана çав антихрис кĕнекине алла ан тыт тесе, ахаҋ те çурри выçă ларатпăр (Çапук патне пырса). Кӳрха, кӳр кĕнекине (Çапук аллинҫи кĕнекине йарса тытаŤ).

ÇАПУК (кĕнекине çирĕппĕн тытса аллинҫен вĕçермесĕр). Ах, анне... памастăп (Марине туртаŤ). Ах, ан тивха, анне, манăн урăх пĕр кĕнеке те çук, кăна та Йакур пиҫҫе панăҫҫĕ (йĕрет).

МАРИНЕ. Памастăн? (Кĕнекине карт туртса илсе кăмакана перет). Ак сана памастăп, ак, ак (Çапука хăлхаран тытса кăмака умне илсе пырса кăтартаŤ).

Куртăни?.. (Çапука йарса каллех ђашăк-тирĕксем çума тытăнаĭ).

ÇАПУК (шăппăн йĕрсе алăк патне кайса лараĭ. Урамра Йакур сассине илтсенех йăпшăнса ђӳређе патне пырса итлет). Ах, Йакур пиђђе... Лайăхрах, лайăхрах вĕсене...

ЙАКУР САССИ. Халăх, неушлĕ ăнланмастăр есĕр мана! Хăвăрах шухăшласа пăхăрха... Макартан пĕр кунлăх суха сухалама лаша илсен, миçе кун ĕçлеттерет вăл уншăн?.. Пĕр ерне. Кивçенле пĕр пăт тырă илсен, миçе пăт тавăрса памалла? Пăт çурă... Пирĕн йалта вăрлăхлăх кивçен йе çиме илекенсем миçе кил? 42 кил. 42 килтен çуршар пăт тырă пухса Макар ампарне хывсан миçе пăт пулаĭ вăл? Çирĕм пĕр пăт. Ертел тусан, вăл Макар ампарне мар, хамăр ампарах йулаĭ. Кунашкал тĕслĕхсене калама çук нумай тупса пама пулаĭ, каламасăрах ăнланатăр пулĕ тетĕп... Вăйран çырмастпăр, хăвăрăн ирĕк, кирек мĕн тăвăр. Хамăра, ђухăнсене пурăнма çăмăлтарах тăвасшăн епĕ...

САСĂ. Вăл ђăнах та çаплах ĕнтĕ, тăвансем. Мĕн пулаĭ килет, çырха мана.

САСĂСЕМ:—Аплатăк мана та çыр.—Мана та.—Çырăн, Уртем пиђђе.—Çырăнам штођ.—Лариван, Лариван, есĕ мĕн çывăрса ларатăн?—О-ой! Астуман та, мĕн?—Çырăн хăвăртрах, çынсем ертел тăваççĕ.—Тавай, пишши апла пулсан. —Кирлĕ мар, хутшăнмастăп.

Сасăсене ăнланма çук. Хытă шавлаççĕ.

МАРИНЕ (*сăх-сăхать*). Ех, тура, тура çырлахах! (*шăппăн*). Çав колхосран хăтарсамҕҕĕ пире...

ÇАПУК (*савăнăçлăн сиккелесе*). Анне, анне, илтетни, çынсем колхоса çырăнаççĕ. Епĕ хам та кайса çырăнами? (*сасартăк*). Анне, аҕа иксĕмĕр те кайса çырăнатпăр! (*сиксе ҕупса тухса кайма тăраҕ, алăка çитсен Марине тытса ҕараҕ*). Ай, ай!..

МАРИНЕ. Ара, мĕн хăтланатăн есĕ аçаçапманскер, ах, пўтсĕр аҕи! Асту, тĕп сакайне хупатăп сана, Çапук! Асту, çĕрçăтасшĕ...

Урамри сасăсем шăпланаççĕ. Çитăр кĕрет. Маринепе Çапук çине пырса тăрăнаҕ. Марине Çапука аллинҕен вĕçертсе йараҕ.

ÇИТĂР (*хайаррăн*). Ку тата мĕн?

МАРИНЕ. Ара, çак пўтсĕр (*Çапука кăтартса*). Колхоса çырăнма тухса тарасшăн (*нăйкăшса*). Ах, ытла та ҕарусăрçке, ытла та ҕарусăр... Мĕн тăвамши ку аҕана, мĕн тăвамши!..

ÇИТĂР. Колхоса? Ах, шăркалçă! Аçу-аннў выçă ларнине пĕлетни? Епĕ сана, мăйна пăрса йарам! (*Маринене*). Ăçтаха, çавăнта пăтара пушă çакăнса тăраҕҕĕ, илсе парха. (*Марине пушă илме кайаҕ*).

ÇАПУК. Ах, атте, епĕ... епĕ... епĕ мар ăна, кĕнеке çинҕе çапла çырнă та... Йакур пиҕҕе каларĕ ăна, «епĕр ҕухăнсем» терĕ.

ÇИТĂР (*Маринене*). Ҕасрах, мĕн мешĕлтетсе тăратăн!

МАРИНЕ (пушине илме тытӑнса тӑрса). Пушӑпах хӗнемесен те йурӗҫке, Ҫитӑр. Пӗҫӗккӗ вӗт вӑл, тӳсеймӗ.

ҪИТӐР. Сана та тивермеллеим тата, ан мӑркаса тӑр, ҫас ту!.. Аҫапӑҫана пӗҫӗкле вӗрентмесен, вӗсем утланса та ларӗҫ.

МАРИНЕ. Ан тив ӗнтӗ, Ҫитӑр, кӑшт хӑлхине пӑркаласа йар та...

ҪАПУК (тӗпел кукринҫи тенкел айне хутланса ларса). Ах, атте...

ҪИТӐР. А-а, есӗ калаҫса тӑмаи? (алӑк патне кайса пушӑ илет. Марине Ҫапука хӳтлесе тӑрать).. Тӑхтаха, епӗ сана!.. (Маринене пушӑпа тивертсе). Ак сана, ак сана, ак сана аҫапӑҫана усалла вӗрентме.

МАРИНЕ (йӑлӑнса). Тархасшӑн ҫарӑн, Ҫитӑр, турӑ пул... (йӗрет. Ҫапук амӗш хӳттине лӑпҫӑнса ашшӗ ҫине йӑлӑнакан куҫӗсемпе пӑхса тӑрать).

ҪАПУК. Ах, атте...

ҪИТӐР (хӗнеме ҫарӑнса Маринене). Пуҫларӗ ӗнтӗ лӑркама, ан лӑрка тенӗ сана!

МАРИНЕ (Ҫапука). Сан пирки пулҫӗ ку (хулхаран йарса тытать). Сан пирки!..

ҪАПУК. Ай, ай, ах, анне, ан тивха...

ҪИТӐР. Лайӑхрах ӑна, лайӑхрах. Халӗ вӑл клупа ҫупса усалланса кайнӑ.

ҪАПУК (йӗрсе). А-а, урӑх каймастӑп!..

МАРИНЕ. Каймастӑни?..

ҪАПУК. Каймастӑп...

МАРИНЕ (йарса). Тепре курсан, хулхуна

пăрса татсах илетĕп. Илтрĕни? (Ç а п у к ђ ĕ н м е с т).

ÇИТĂР. Çитĕ ĕнтĕ сана унпа аппаланма, йашка антарса парха.

МАРИНЕ. Халех, халех, Çитăр. (К ă м а к а у м н е п ы р с а й а ш к а а н т а р а ť).

ÇИТĂР (с ĕ т е л х у ш ш и н е к ĕ р с е л а р а ť, Й а ш к и н е с ы п а ť). Йашка мар ку сан, шыв, мĕнле çав есĕ çак таранђђен те йашка пĕçерме вĕренместĕн. Ара, пĕр пăрђă çу курăнмасť. Ним тути те çук.

Çапук алăк патĕнђе нимĕн ђĕнмесĕр лараť.

МАРИНЕ. Ара, Çитăр, есĕ ухмаха йермен пуљçке, пĕçермелли пулсан пĕçереттĕмĕр те-ха, анђах мĕн йарса пĕçерес ман. Сынсен пек сĕђĕ те, ашĕ те çукçке. Йулашки çăнăхпа ђуста çăрса лартрăм. Ку пĕтсен тем çисе пурăнмалла ĕнтĕ.

ÇИТĂР. Макар патне кайса кивçен илĕпĕр (с а с а р т ă к а с а и л с е). Тем вара, Макар тек парĕши... Ех, шуйттан · Йакурĕ, халăха пăтратса таçта кўртсе йараť. Ун пирки выçах лармалла пулаťиха?.. Çăва патĕнђен туртса кăларђĕç вăл колхоса. Ех, шуйттан самани...

ÇАПУК. Колхоса кĕрсен пирĕн пурте пулаť, ун ђухне вара епĕр те йашка çине çу йарса çийетпĕр. Йакур пиђђе çапла калаť, ђăнах та.

МАРИНЕ (ш ă п п ă н Ç а п у к а). Хуп çăварна, есрелĕ ађи, асту лекет.

ÇИТĂР. Ах, çĕрçăтманскер, есĕ татах çав Йакурпа, мăкла çăварна, атту халех урама кăларса ывăтатăп. (Х ă й ă с с ĕ н). Çук, çук, ку

аҫаран ҫтем пулас ҫук, темӗн каласан та хӑй йурринех йурлаҭ.

МАРИНЕ. Аҫана шалтах пӑсса йаҫӗҫ. Ҫав клупа ҫӳресех пӑсӑлса карӗ вӑл, унҫҫен ун пек марҫҫӗ...

ҪАПУК. Епӗ сире нимӗн те туманҫке. Кӗнеке ҫинҫе ҫырнине ҫеҫ каласа патӑм. (Х ӑ й н е х ӑ й). Рас кӗнеке ҫинҫе ҫырнӑ тӑк, тӗрӗсех вӑл...

ҪИТӐР. Сассу тухтӑр!

Ҫав вӑхӑтрах Хӗлип ҫупса кӗрет.

ХӖЛИП. Ҫитӑр муҫи, Ҫитӑр муҫи, сана атте наҫҫас пытӑр терӗ.

ҪИТӐР (а п а т ҫ и с е п ӗ т е р с е). А-а, Хӗлип... Епӗ халех пыратӑп, аҫам. (М а р и н е н е). Хӗлипе апат лартса йамаллаҫҫӗ.

МАРИНЕ. Кил, лар, Хӗлип, пирӗн йашкана сыпса пӑх.

ХӖЛИП. Ман ҫиес килмест, халҫ анҫах услам ҫупа, ашпа ҫитерҫӗ анне.

Ҫапук сасартӑк ҫӗлхине ҫулласа илет.

МАРИНЕ. Пирӗн апата ҫийети вара вӑл.

ҪИТӐР. Ним ҫук пулсан та, кӑмӑллӑх пӗр кашӑк сыпса пар ӗнтӗ.

ХӖЛИП (п ӗ р к а ш ӑ к с ы п а ҭ т е с у р с а п ӑ р а х а ҭ). Сирӗн йашка ма тутлӑ мар вӑл, Ҫитӑр муҫи?

ҪИТӐР. Сирӗн пекех пӗҫерме пӗлмеҫҫӗ ҫав пирӗн.

ҪАПУК. Есир пуйан, ҫавӑнпа сирӗн тутлӑ пулаҭ.

МАРИНЕ (Ҫ а п у к а т ӗ р т с е). Ан шарла, ҫапла калаҫҫӗи вара.

ÇИТĂР. Есĕ Хĕлип вăл каланине ан итле, ухмах вăл. Аттă, кайăпăр еппин...

Тухса кайаççĕ. Хĕлип Çапук çине хайаррăн пăхса тухса кайать.

ÇАПУК (хыçалтан). Кулак ђĕппи, кулак ђĕппи, кулак ђĕппи.

МАРИНЕ. Ђар ђĕлхуна, есрелĕ ађи, кам çăкрине çийетĕн есĕ! Хĕлипсем пулмасан ђĕнкелеме тухса кайаттăмăр. (Хăйне хăй). Ах, ытла ухмахçке, ытла ухмах...

ÇАПУК. Мĕншĕн тата вăл хăй мана урамра хăваларĕ...

МАРИНЕ. Кирлĕ пулнă пуљ, есĕ каскăн: хăвна ваљђи шырасах çӳретĕн. Хĕлип вăл сан пек мар, ăслă. Ашшĕ-амĕш мĕн каланине йалах итлет. Санашкал кĕпекесемпе ухмахланмасть вăл.

ÇАПУК. Есĕ Хĕлипсене мухтатăн, вĕсен ашшĕ мĕншĕн Йакур пиђђене... (сасартăк аса илсе калама ђарăнать).

МАРИНЕ. Мĕн?

ÇАПУК. Çук, темскер... манса карăм.

МАРИНЕ. Мĕн тетĕн есĕ, вĕсен ашшĕ Йакур пиђђуна мĕн?

ÇАПУК. Епĕ ахаљ, анне...

МАРИНЕ. Санпа аппаланкаласа тăрса мансах кайнă. Килтех лар, ниçта та ан кайнă пултăр, епĕ нађђас кинемусем патне кайса çĕпре илсе килем (пĕђĕк ђей ђашки илсе тухса кайать).

Çапук пĕђђенех.

ÇАПУК (алăк патне ђупса пырса амăшĕ кайни-кайманнине пăхаť). Кайнă. Хĕлип аттене мĕн тума ђĕнсе карĕха? Мĕн тăвасшăн вĕсем аттепе... Макарсен кĕçĕр пухура ĕç тухмарĕ.... çавăнпа пуљха... Неушлĕ аттене хушаççĕ... ах, мĕн... мĕн... мĕн тăвасха... Епĕ çак таранђђен те Йакур пиђђене кайса систермерĕм. Мĕншĕн, мĕншĕн курайнаççĕ вĕсем ăна? Çук, хăť мĕн тăвăр мана, епĕ Йакур пиђђене вĕлерттерместĕп сире. Йакур пиђђе аван çын вăл. Вăл нихăçан та çынна усал тăвасшăн мар, ђухăнсен пурнăçне лайăхлатасшăн ĕçлетĕп тет вăл. Пире ваљљи калстăксем, параппан илсе килсе паратăп терĕ-ха.... Халех кайса пĕтĕмпех каласа паратăп (тухса кайма тăраť. Ăна хирĕç Марине кĕрет).

МАРИНЕ (Çапук çулне картласа). Есĕ ăçта тухса тарасшăн, ђупкăн!

Ђаршав.

## III-мĕш КАРТТИН.

Макар патĕнђе. Кулак пўрђĕ. Каç. Мирунпа Макар сăра ĕçсе лараççĕ.

МАКАР. Кĕтемĕн килмеллеçке, тем туса тăраť.

МИРУН. Килĕçке, ăçтаваскас.

МАКАР. Есĕ ман çине ан пăх, ĕçха, ĕç.

МИРУН. Ĕçетĕпха.

МАКАР. Саккускă хатĕрлемеллеђђĕ те, карђăк килте пулмарĕха. Тип çăкăр пулсан та, çырткала ĕнтĕ.

МИРУН. Тупрĕ калаçмалли, ой, ан ђăрман, кунпах та таволђнă. (Ĕ ç е т).

Çитăрпа Хĕлип кĕреççĕ.

МИРУН. Каларăм вĕт сана килеççĕ тесе.

ÇИТĂР. Пирĕн килес, вăй патăр.

МАКАР. Килехха, килмаларах, (к ĕ р е к е н е к ă т а р т с а) ак çакăнта иртсе лар.

ÇИТĂР. Кунта та пыркалĕçке, ђаплă йышшисемех мар.

МИРУН. Рас хуçи ђĕнет, кăмăл тăвасах пулаť ĕнтĕ (М а к а р ç и н е п ă х с а к у ç н е м ă ђ х у п а ť).

МАКАР. Иртха, ирт ара (ш к а п п а т н е п ы р с а). Килекен хăна валђђи пирĕн шурăрах тĕсли те пулаканђђĕ (и к ĕ п у л ă ш т а в е р е х и л с е п ы р с а с ĕ т е л ç и н е л а р т а ť. Х ĕ л и п е). Хĕлип, есĕ нађђас нўхрепрен шăрттан илсе килха. Асту, унта çутăпа хуллентерех. Асăрха.

ХĔЛИП. Халех, атте (т у х с а к а й а ť).

Çитăр куçне сиктермесĕр ерех кĕленђисем çине пăхса лараť.

МАКАР (е р е х н е ђ е й с т а к к а н ĕ ç и н е т у л т а р с а Ç и т ă р а т ы т т а р а ť). Ĕçсе пăхха, мĕн тути калаť, тутлă пулсан, татах та йарса парăп.

ÇИТĂР. Ђăрманма кирлĕ марђђĕ, Макар Кераçăмђ.

МАКАР. Мĕн ђăрмавĕ пултăр унта, ĕçха, ĕç. Епĕр сыпкаларăмăр.

ÇИТĂР. Ĕçнисене тавăсйа.

МАКАР. Тавахха, тавах. (Ҫ и т ӑ р ё ҫ е т). Ак кунта саккусккӑ вырӑнне ҫӑкӑр пур, ҫырткала.

ҪИТӐР. Так ђӑрманатӑн ес, Макар Кераҫӑмђ.

МИРУН. Макар пек ҫынпала пурнӑҫ тума пулаҭ.

ҪИТӐР. Ара, еп калани ҫавна.

МАКАР. Ара, пурӑнмасӑр, ку таранђђен ҫаплах шӑкӑртаткаласа пурӑнкаларӑмӑр таха. Ҫук ҫынна пулӑшмасан ђун ђӑтмасҭ ман. Намӑса ӑҫта хуран (с т а к к а н а т у л т а р с а Ҫ и т ӑ р а п а р а ҭ). Ӗҫха, ӗҫ есӗ.

ҪИТӐР (х ӗ р ӗ н к ӗ). Настойаши ерех ку, Макар Кераҫӑмђ.

Хӗлип шӑрттан илсе кӗрет. Ҫурмалла уҫӑлса тӑракан пахђа йенђи ђӳређере Ҫапук пуҫӗ курӑнаҭ. Кӑшт тӑрсан каллех пытанаҭ.

ҪИТӐР. Ку таранђђен пӑрахманна малашне те ан пӑрахах ӗнтӗ, Макар Кераҫӑмђ.

МИРУН. Ай, аппаланан кирлӗ мара, Макар пӑрахати вара.

МАКАР (Х ӗ л и п а л ӑ к п а т ӗ н ђ е т ӑ н и н е к у р а). Тухса выртах, ађам, пӑлтӑра. (Х ӗ л и п ђ ӗ н м е с ӗ р е х т у х с а к а й а ҭ). Пӗр-пӗринпе килӗштерсех пурӑнасђӗха. Ҫав Йакур темскер хӑтланма пуҫларӗ. Тек пӑтратса ҫӳрет.

Ҫапук кармашса пӑхаҭ, каллех пытанаҭ.

ҪИТӐР. Еп калани ҫавна. Е-е, нипођђом! Ҫавна мах паратпӑри вара.

МИРУН. М а к а р к у ҫ ӗ н ђ е н п ӑ х с а). Мӗн тӑвас тетӗнха есӗ ӑна?

МАКАР (стакканне тултарса Çитăра парать). Ĕçха, ĕç.

ÇИТĂР (стакканне ĕçсе ўпĕнтерет). Уншăн пулсан мĕн, калаçса тăратпăри епĕр унпа. Шаккамалла как натă пĕрре, хăйех ђарăнать.

МИРУН. Пултарасса пултаратăн, анђах неснай (пуçне пăркалать).

МАКАР. Итлеха, Çитăр (шăппăн). Сан килте маткупа ађу пĕр татăк çăкăрсăр ларнине аван пĕлетĕп епĕ. Çавăнпа хĕрхенетĕп сана. Йакура шакканипе кăна сахал.

МИРУН. Тĕппипех шаккаса хумалла.

МАКАР (Мирун çине ђейен пăхса). Есĕ ан ђăрмантарха. (Çитăра). Çапла вара, Йакур пулмасан санăн та, манăн та хырăм тутă пулать. Анкартинђи ампар шалккă мар саншăн. Йакуртан хăтăлма кăна пулăш. Пурăннă пурăннах, ĕмĕр пĕрле пурăнар.

МИРУН. Çапла пулмасăр ара, çаплах.

ÇИТĂР (сасартăк шикленсе). Йакура вĕлерме?.. Уй, çук, халиђђен йун йухтармана пулас çук манран, пулас çук. Темĕн тумма хушăр мана, тăватăп, анђах ку ĕçрен тархасшăн хăтарăр, йăлăнатăп сире.

Çапук ђўређерен Çитăра пуçĕпе сулать. Çитăр асăрхамасть. Çапук пытанать.

МАКАР (стаккана тултарса тыттарать). Ĕçха, ĕç ара.

ÇИТĂР. Çук, çук... пулас çук манран, Макар Кераçăмђ.

МИРУН. Ҫав тери йăвăр ĕҫех марҫке. (Ҫитăра хулпуҫҫинчен лăпкаса). Ара, есĕ арăмупа ачуна аса илха, выҫă лараҫҫĕ вĕт... Ку ĕҫ хыҫҫăн ҫемйипе ĕмĕр тутă пулатăн, ҫавна манма йурамаст, Ҫитăр...

МАКАР. Макар вăл нихăҫан та ҫынна усал сунман. Макар йаланах чухăнсемшĕн тăрăшать. Йакур йалшăн сийенлĕ иккенне хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ. Есĕ те, епĕ те, вăл та (Мируна кăтартать) выҫă ларăпăр. Шухăшласа пăх.

ҪИТĂР (йĕрет. Ӳсĕр. Тайкаланать) Марине, Ҫапук... выҫă... Сирĕншĕн, сирĕншĕн ҫын вĕлерет Ҫитăр... Сирĕншĕн... Есĕр пулас мар тăк, епĕ ҫын йунĕпе вараланиччен... (паусă) хутаҫ ҫакса тухса кайăттăм... Ех, мăнтарăн пурнăҫĕ...

МИРУН (Макар ҫине чейен пăхса). Усал ҫынна вĕлернĕшĕн ҫылăх мар, сăвап пулать.

ҪИТĂР. Тем пекчĕ, анчах алли ҫĕкленмест (тайкаланса Ҫапук тăракан чуречe умĕнчи тенкел ҫине пырса тăрăнать). Хамшăн мар еп, Маринепе Ҫапукшăн килĕшетĕп... (пуҫне чăмăртаса тытса). А-а-ах! (сасартăк). Ха-ха-ха.

Макарпа Мирун, Ҫитăр ҫав тери ӳсĕррине курa, пĕр-пĕрин ҫине пăхса кулкаласа савăнăҫлăн кулаҫҫĕ.

ҪАПУК (чӳрече виттĕр шăппăн). Атте, атте мĕн хăтланатăн есĕ, атте...

ҪИТĂР (пуҫне чӳречe патнелле тытса). А? а-а? Мĕн?.. Мĕн терĕн есĕ?.. (Ҫапук пытанать, Ҫитăр кăшкăрса йарать).

МАКАР (Ҫитăр патне пырса ҫĕклесе

тăратасшăн, Çитăр тăмасҭ. Мирун тепĕр стаккан ерех тултарса пырса Çитăра ĕçт ерет). Хаҍ ĕнтĕ килĕшетни? (хыпаланса). Йакур кĕçĕр çĕр выртмалла хулана ертел ĕçĕсене çирĕплетме тухса кайнă. Ыран каç таврăнаҭ. Унăн ырăнĕ пахҙара. Çтаппансен йенҙи сарай çумĕнҙе. (Мируна куçĕпе мăҍ хупаҭ. Мирун атă кунҙинҙен çĕçĕ кăларса Макара параҭ). Ме сана çĕçĕ (Çитăра тыттараҭ). Йашлаттар ыран каçхине... çурçĕр иртсен. Ампар, килкартинҙи пĕҙĕк пӳрт, 20 пăт тырă санăн пулаҭ.

ÇИТĂР (Макарпа Мирун çине пăхса ыртаҭ). Ман!.. ман... 20 пăт тырă ман... (сиксе тăрса). Çирĕм пăт... (çăмăлланаҭ). Çирĕм... пăт! ой, Йакку Йăванҍ, çирĕм пăт!..

МИРУН. Ампарпа пӳрт.

ÇИТĂР (çăмăлланса). Ампарпа пӳрт манăн, манăн пулаҭ... Ой, Йакку Йăванҍ!..

МАКАР. Килĕшетни?

ÇИТĂР. Ой, Йакку Йăванҍ, килĕшмесĕр ара, кĕçĕрех пилĕк Йакур пусса паратăп! (йурлаҭ, ташлаҭ, каллех ҙӳреҙе умĕнҙи тенкел çине пырса тăрăнаҭ). Епĕ кам!.. Кам епĕ... кам... кам епĕ Йакку Йăванҍ!.. Кам?!..

Макарпа Мирун ĕçеççĕ.

МАКАР. Йепле çăмăлланаҭ.

МИРУН. Турак тăк тураках çав (калаçаççĕ).

ÇАПУК (ҙӳреҙе виттĕр). Мĕн тăватăн есĕ, атте, мĕн тăватăн?.. ан килĕш, епĕ ку, епĕ Çапук. Йакур пиҙҙе аван çын (çухалаҭ).

ÇИТĂР (ҫӳреҫе йенелле ҫавăрăнса). Мĕн?.. мĕн тетĕн?.. Çапук тетни ҫав... Çапук! Çапук! (пуҫне ҫăмăртаса тытса). Ах, Çапук!..

МАКАР (Çитăр ҫине пăхса Мируна шăппăн). Темскер, ухмаха йере пуҫларĕха ку пирĕн.

МИРУН (ерекекĕленҫине кăтартса). Ку, темĕн тума пултарĕ. Кунпа ĕҫ тума пулаĕ. Мĕн пур ҫынна ухмаха йертекенни ҫавă.

ÇИТĂР. Макар Кераҫăмҫ, Макар Кераҫăмҫ (йурлаĕ).

МАКАР. Е?

ÇИТĂР. Макар Кераҫăмҫ...

МАКАР. Ну, вара?

ÇИТĂР. Ес пури?

МАКАР. Кунтахҫке, кунтах епĕ, Çитăр.

ÇИТĂР. Ес пури?..

МАКАР. Пурҫке, пур.

ÇИТĂР. Пулсан йураĕ... (йурлаĕ).

ÇАПУК (ҫӳреҫе виттĕр). Атте, атте... Санран мăшкăлаҫҫĕ вĕсем. Сана Йакур пиҫҫене вĕлерме йараҫҫĕ. Ан кай, атте, ан кай (ҫухалаĕ).

ÇИТĂР (калаҫайми пулса). Пĕлместĕн ес, пĕлместĕн ес, Çапук ывăлăм (уйран ҫӳпҫине ыталаса тытса ҫуп тăваĕ). Ех, Çапук, Çапук, саншăн, саншăн пурнатăп епĕ, саншăн... (уйран ҫӳпҫине тата хытăрах ыталаĕ).

Мирунпа Макар кулаҫҫĕ.

ÇИТĂР. Пĕлместĕн ес, пĕлместĕн, Çапук, çирĕм пăт тыră... Ампар... Пÿрт... Пĕлместĕн ес, Çапук! (Уйранçÿпçине хытăрахпăҫăртаса тытса ҫуп тăвать. Ыталанипех çĕрe персе анать).

Макарпа Мирун пырса тăраççĕ.

ÇИТĂР. Кам?!.. кам унта мана тивет... Кам!.. Ой, Йакку Йăванҫ, Макар Кераçăмҫ, ес пури?

МИРУН. Йеçсе йарас, кунтах вырттарсан çынсем темĕн шухăшлама пултарĕç.

МАКАР. Ҫăнах та. Епĕ аса та илмен ăна.

Сĕтĕрсе тухса кайаççĕ. Çитăр сасси стсенă хыçĕнҫе: «Пĕлместĕн ес, Çапук, пĕлместĕн... çирĕм пăт... çирĕм пăт Йакку Йăванăҫ...»

ÇАПУК (ҫÿреҫе витĕр). Мирунпа макар пек пуйансене Йакур пиҫҫе ак мĕншĕн кураймасть. Вĕсем пирĕн аттене те тыră парса çын вĕлерттересшĕн, çук, атте, есĕ ман атте пулсан та, епĕ сана вĕсем хыççăн кайса Йакур пиҫҫене вĕлерме ирĕк парас çук...

Ҫаршав.

## 4-мĕш КАРТТИН.

2-мĕш карттинри стсенă. Каç пулнă. Çитăр пĕҫҫенех.

ÇИТĂР (сĕтелçинепуçнехурсавыртать). Ах, пуç... çурмаран çурăлсах тухать ĕнтĕ. Вăл ерехе ĕçиҫҫен ĕçес килет, ĕçсен... вилес килет. Лайăххăн астумастăп, мĕн-мĕн хăтлан-

са пĕтнĕши еп Макар Керaçăмҫ патĕнҫе... (с а с а р т ă к). Пастайха, пастай... астурăм... Ах, шуйттан ҫухăн пурнăçĕ, мĕн-мĕн тутармăнши ес!... Каç... Нихăçан çынăнне пĕр пĕрҫĕ вăрламан, нихăçан çынна йатлаçса вăрçман. Çитăрăн... кĕçĕр... çын вĕлерме каймалла. Мĕншĕн? Маринепе Çапука тутă усрассишĕн, ĕçкĕшĕн... Мĕнле алла çĕклес, мĕнле çĕклес! (п у ç н е и к ĕ а л л и п е п ă ҫ ă р т а с а т ы т а ӑ. С а с а р т ă к). Çук, мĕн хăтланатăп епĕ, мĕн хăтланатăп? Йакур пек усал çынсене вĕлермелле. Вăл халăхшăн сийенлĕ çын. Ҫĕрĕ пуçпа, антихрис пек илĕртсе çынсене колхоса кӳртет. Пĕртен пĕр атте турра пăхăнман саттана вăл. Макарпа Мирун пĕтĕм йал халăхне ĕç тупса парса тăрантарса усрарĕç. Йакур, Йакур, есĕ те Макар çăкрине çисе пурăннине маннă. Ун патĕнҫе тарçăра пурăнман пулсан, кĕтмен çĕр айĕнҫе пулаттăн. Халҫ ĕнтĕ Макара хирĕç тухса, сăмах калама хăйатăн, намăссăр. Совет ҫухăнсене пулăшаӑ тетĕн, кирлĕ мар мана пулăшу, выртса вилсен те антихрис çăкрине çиместĕп.

Марине Çапука çавăтса кĕрет.

ÇАПУК. Ах, анне, ан тивха, ан тив...

МАРИНЕ. Çакнашкал каç пулсан кам ухмаххи урам тăрăх çапкаланса çӳрет. Ай, йаш-кĕрĕм есĕ? (Ç и т ă р а). Мĕн тăвасах ку аҫапа, мĕн тăвасах, каласам, ашшĕ. Йакурсен тĕлĕнҫе темскер йавкаланса çӳрет, те пылпа çу хурса панă ăна ваҫҫи унта...

ҪИТĂР. Хамăрах ухмах, Марине, ађапăђана тыткалама пĕлместпĕр. Ыр ҫын ађипăђи те ырах пулат̆, ав Макар Кераҫăмђăн Хĕлипне пăхха, килтен тухмаст̆, пирĕн пур—йытă пек ђупат̆.

МАРИНЕ. Пĕђĕккĕ ђух ытла та ађашласа ӳстертĕмĕр ҫав.

ҪИТĂР. Макар Кераҫăмђ ађапăђана урăхларах тыткалат̆ вăл. Кашни куллен иккĕ-виҫҫĕ ислетет. (*Ҫапук нимĕн ђĕнмесĕр пуҫне ђиксе тăнипе кура*). Есĕ мĕн йунтарса тăратăн, кĕрсе вырт!

Ҫапук алăк патĕнђен сак ҫине выртат̆. Маринепе Ҫитăр ҫине куҫ сиктермесĕр пăхат̆. Хушăран алăк ҫине пăхат̆.

ҪИТĂР (*Маринене*). Епĕ нађђас Макар Кераҫăмђ патне кайса мухмăр ђĕртсе килем. Пуҫ пайан иртенпе ҫурăлсах тухат̆. Ни апат анмаст̆, аптрал...

Ҫапук хăй ури вĕҫĕнђе выртакан пысăк ҫĕҫҫе асăрхат̆. Урипе ҫаклатса ҫивĕтти айĕн кăларса пуҫ айне пытарат̆.

МАРИНЕ. Тархасшăн, турă пул, Ҫитăр, ан кай, кĕҫĕр ĕҫсе тултаратăн та, ыран каллех пуҫ... Ҫынсем пур, аки-сухине тирпейлесе пĕтереҫҫĕ, есĕ мухмăрпах супатăн.

ҪИТĂР. Санран ыйтмаҫҫĕ, сан укҫупа ĕҫмеҫҫĕ. (*Тарăхса*). Ех, ҫав хĕрарăм таврашĕ, арҫын ĕҫне хутшăнсах хуплат̆. Сансăрах пĕлеҫҫĕ унта (*тухса кайма тăрат̆, алăк патне ҫитсен ҫĕҫĕ ҫинђен аса илсе кайалла ҫаврнат̆*). Ман ђĕлĕм ăҫта ҫăва патне

карĕ. (Çапук çывăрнă пек пулать. Çитăр Çапук ури вĕçне пăхсан çĕçĕ çуккине асăрхать. Çапука). Тăрха, тăр, ђĕлĕме айала тунă шуйттан ађи.

ÇАПУК. А-а-ах! (карăнса тепĕр майлă çаварăнса выртать).

ÇИТĂР (Çапука лăкаса). Тăр тенĕ сана, тăр!.. халĕ кун каçиђђен ђупать, ђупать те, кусне уçаймасть, сысна çури?

ÇАПУК (кусĕсене шăлкаласа). Мĕн?.. мĕн... мĕн... (карăнса каллех çаварăнса выртать).

ÇИТĂР (тарăхса). Тăр, есрелĕ ађи! (Çапук тăманнине кура, çĕре туртса антарать. Çапук урайĕнђе нăйкăшса выртать. Çитăр вырăна пусторать. Çытар айĕнђи çĕççе Марине курађђен хўме ђикет. Кăсйинђи ђĕлĕмне вырăн çине кăларса пăрахать те). Шуйттан ђĕлĕмне аран-аран тупрăм...

МАРИНЕ (тĕпел кукринђе ним ђĕнмесĕр тăраканскер). Тархасшăн турă пул, Çитăр...

ÇИТĂР (Çапука урипе тĕртсе). Ну, халђ ĕнтĕ кĕрсе выртах, ыйăх ђăпти (алăка хăлтлаттарса хупса тухса кайать).

МАРИНЕ (алăк патне хăвăрт утса пырса). Ах, Çитăр...

ÇАПУК (пуçне çĕклесе). Тухса кайаймасан, Йакур пиђђене вĕлереççĕ вĕсем. Епĕ вĕлерттерместĕп тесе сăмах патăм...

МАРИНЕ. Есĕ мĕн мăкăртатса выртатăн, тăр та, хăпарса вырт.

ÇАПУК. Анне, ман ыйăх килместçке...

МАРИНЕ. Ыйăх килмест парам ак еп сана! (Çапук вырăн çине ухса выртать. Марине саппанĕсене хывса вырăн çине кĕрсе выртать. Анаслать. Пауса).

Çапук алăк çине ђăрлаттарса пăхса выртать.

МАРИНЕ (анаслать. Тути çине хĕрес хурса). Ах, турă, турăçăм, çав Çитăра ĕçме пăрахтарсамђĕ... Каплах пурăнсан, выçах вилетпĕр епĕр... (каллех анаслать. Çапук çывăрнă пек пулса хăрлаттарать). Темшĕн пирĕн тĕллĕнех пурнăç ытла та хĕсĕк. Ех, турă, мĕншĕн есĕ пире çав терийех асаплантаратăн, мĕнщĕн... Пĕртен пĕр ађам комуниссен йеннелле пăрăннăшăни? Пĕђĕкккĕ вĕт вăл, нимĕн те пĕлмест, каçарсам есĕ ăна, турă... йăлăнатăп (тĕлĕрсе кайать. Хăрлаттарнă сасă илтĕнет).

ÇАПУК (пуçне çĕклесе тавралла пăхса, Марине çинђе ђарăнса тăрать. Пауса. Йерипен вырăн çинђен шуса анать те алăк патнелле йăпшăнса пырать, шăппăн). Çывăрнă... (Марине тепĕр айакки çине çавăрăнса выртать. Çапук шикленсе кутăн ђакать. Кăмака çумĕнђи тенкĕл çинђе лара кан витрене ђавсипе тĕртĕнсе çĕре ўкерет). Ах!..

МАРИНЕ (сасартăк çиксе тăрса). Кам?! кам унта?.. (Çапука курса). Ах, есрел ађи, çĕрçăтмансхер!.. Ăçта çăва патне кайма

тухрăн? Ах, ах, ах ђĕре... (кăкрине аллипе тытаť). Мĕн тăвасах санпа, мĕн тăвасах... Ах ытла каскăнçке, ытла каскăн...

ÇАПУК (йĕнĕ пек пулса). Анне, есĕ мана йаланах йатлаçатăн. Пађуксен амăшĕ Пађукне никçан та йатламасť. Епĕ... епĕ... (шухăшлаť). Ман шыв ĕçес килђĕ те...

МАРИНЕ. Тăварлă пулă çирĕни мĕн, шампахырăмĕ?!

ÇАПУК. Йакур пиђђесен амăшĕ çитерђĕ.

МАРИНЕ. Ыйăх çăвăрма памастăн, ĕç те, кĕрсе вырт. Сассу тухнă пултăр... (вырăн çине вырталť. Çапук шыв ĕçнĕ пек тăваť те хăй вырăнне кĕрсе выртаť). Ку ађапăђана вăрçсах тăн тухаť ĕнтĕ. Кашни ура йарса пусмасрен мĕн те пулин тăватех, етем пулати вăл... (анаслаť. Паусă).

Çапук çывăрмасť. Марине ђылайђђен тĕлĕрсе, анаслакаласа выртаť. Çапук темиçе хутђен Марине çине пуçне çĕкле-çĕкле пăхаť. Марине çывăрса кайаť.

ÇАПУК (вырăн çинђен Марине патне пыраť. Пуçне Марине кăкри тĕлне тытса илет). Çывăрђĕ (сывлăшне çавăрса йараť. (Йерипен, кутăн ђакса пырса алăк хăлăпне йарса тытаť. Куракансене шăппăн). Анне вăрансан, епĕ ăçта кайнине тархасшăн ан калăр. Йурати, ађасем? (ађасем ответ парсан). Епĕ Йакур пиђђене кайса систерем... вĕлереççĕ вĕт вĕсем ăна... (алăка уçма тăраť. Çуррине уçсан, алăк ђăриклатнă пирки

сывлăш çавăрмасăр лапăнса тăрать. Марине тапранманнине кура хĕсĕнсе тухса кайать. Пауса).

МАРИНЕ (тĕлĕкре). Çитăр! Çитăр!.. Тархасшăн ан çап, Çитăр, а-а-ап!.. (кăшкăрса йарса вăранать). Ах, ах, ах, ђĕре, ах, Çитăр... (куçне уçса тавралла ђылайђђен пăхкаласа ларать. Çапук çуккине асăрхаса вырăн çинђен сиксе анать). Çапук, Çапу-ук! ăçта çăва патне тухса тарђĕши... Çапук, Çапук тенĕ сана! (пўртре ухтарать. Тула тухса кăшкăрать те пўрте кĕрет. Куракан ађасенђен ыйтать). Сире ђăрмантарап пулин те, каçарăр мана. Çапук ăçта кайнине куртăр пулсан тархасшăн каласа парăрха?.. Пĕртен пĕр ывăлăм вĕт вăл ман... Ма ђĕнместĕр, куртăри, калăрха ађасем. (Ответ парсан). Мĕн?.. курман... пĕлместпĕр теттĕри?.. Ах, шуйттан ађипăђи (йĕрет). Хам кайса шыраса тупсан, тупа та хăлхине кăкласа, кăларсах илетĕп! (тухса кайать).

Ђаршав.

## 5-мĕш КАРТТИН.

Каç. Тĕксĕм уйăх çутти. Сарай çумĕнђе Йакурăп шăналăк карса тунă çывăрмалли вырăнĕ. Сылтăм йенђе сарай кĕтесси, йăвăç курăксем курăнаççĕ. Пахђа. Стсенă умĕнђе сайхалăх карта. Карта ку йенђе пралук шутланать.

Вехтĕрпе Йакур иккĕнех вырăн çинђе ларaççĕ. Шăналăк хĕррине çӳлелле çавăрса хунă.

ЙАКУР. Ыран каçхине комсомол йађейккин пӳровне пухса колхос правленине кама-кама суйласси çинђен калаçса пăхăпăр. Пухурах суйламаллађђĕ те, май килмерĕ... Хуларисем çаплах та йурăт терĕç.

ВЕХТĔР. Правлени суйлас пулсан кам-кам çырăннине кăна ђĕнетпĕр пуљ.

ЙАКУР. Вăл çапли çаплах таха, анђах, çапах та калаçса пăхни ђăрмантармĕ. Правленинђе лайăх, тăрăшса ĕçлекенсем пулсан, хамăршăнах аван. Ман вăхăт пулаймĕ, есĕ хăвах кайса систеркелеха.

ВЕХТĔР. Ăна пухасси йăвăр ĕçех мар, ку таринђђен тупă ĕçе алăран вĕçертмĕпĕрха. Макарпа Мирун йыттисем кăшкăрса çĕнтерейменне, тин парăнас çук.

ЙАКУР. Çав Çитăр пиђђерен тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕп епĕ. Мĕнле вăл халиђђен те тăна кĕреймест. Выçă ларин ларăт, çапах та Макарсем майлă.

ВЕХТĔР. Тĕттĕм, вĕренмен, тата ĕçкĕпе пăсăлма пуçланă çын вăл. Ăна тӳрлетме хĕнтерех.

ЙАКУР. Çапукĕ калама çук йăрă ађа, отретре унашкал çивĕђђи те çук терĕха вошаттăй. Ашшĕпе амăшĕ хĕнесех тăпсине кăлараççĕ унне. Шухăшлатăп, шухăшлатăп та, колхоса хамăр пата усрама илес марши ăна?...

ВЕХТĔР. Хамăр ваљђи йурăхлă çменă ӳсет пулсан, ма йышăнас мар, Йакур, йышăнас (*кулкалаť*).

ЙАКУР. Йурăхлă тĕлĕшĕнђен ан та калаç. Шантаратăп.

ВЕХТĔР. Правлени суйласан калаçăпăр. Ытла та нумай пулђĕ, кĕç-вĕç çурçĕр çитет пулмалла, епĕ вĕçтеремха. Есĕ те хуларан ланккаса килсе ыртăн пулмалла. Виçĕмкун каç çеç тавăрăнтăн, пайан каллех...

ЙАКУР. Ĕç тухсан, кашни куллен пĕрре кайса килме те йурать. Ун вырăнне кайран, пурнăç йусансан канăпăр. Çаплан, Вехтĕр?..

ВЕХТĔР. Хамăр канаймасан та пирĕн ађасем канĕç. Ну, халĕ сывă пулха, епĕ вĕçтерем. Ыран каççăр та курас çук.

ЙАКУР. Вĕçтер апла пулсан.

ВЕХТĔР. Çапла вара... (т у х с а к а й а т).

ЙАКУР (п ĕ ђ ђ е н е х. В ы р ă н ç и н е в ы р т с а х ă й т ĕ л л ĕ н к а л а ç с а в ы р т а т). Аван, шанђăклă йулташ. Вехтĕр пекки тепĕр тăваттăн-пиллĕкĕн пулас-тăк, кĕтемĕн ђылай малалла кайнă пулăттăмăр. Çийелтен пăхсан йала сотсиалисăмлă çул çине кăларас ĕç калама çук çăмăл пек туйăнать. Тума тытăнсан, тунса тăмалли çук—йăвăр. Йăвăр кăна мар, питĕ те йăвăр (а н а с л а т). Çапла çав... Çапла... Тымарсем, авалхи тымарсем нумай. Пĕр ўркенмесĕр, пур пек вăйа шеллемесĕр, ђавсисене тавăрса тĕппипе, пикенсе кăклас пулать вăл тымарсене. Пĕђђен-иккĕн кăкланипе сахал, нумайăн кирлĕ. Пионер, комсомол, партти, парттире тăман патрак, ђухăнпа вăтам хресђенсем пурте пĕрле пулмалла. Анђах пĕрлештерме, вырăнтан хирсе тапратма йăвăр (а н а с л а т). Пуç-

ламĕшĕ пур. Малаллăхĕ, малаллăхĕ те пулĕ (хыттăнран та хытă анаслаť. Ыйăхлă сасăпа). Парăнар мар... Вăй пур ђухне малалла, малаллах утарха...

(Карăнкалаť, шăналăкне витет. Тĕлĕрсе выртса çывăрса кайаť. Паусă).

Сарай кĕтессине Çитăр йăпшăнса пырса тăраť. Йерипен Йакур вырăнĕ çине пăхаť. Хăй хĕрĕнкĕ. Тавралла пăхкаласан-пăхкаласан пилĕк пиççийĕ хушшине ђикнĕ çĕççине туртса кăлараť. Çĕççи уйăх çуттипе йăлтăртатаť. Малалла пĕр икĕ утăм туса, шăналăк хускалнине кура кайалла ђакаť. Шăналăк хускалма ђарăнсан каллех йăпшăнса шăналăк патне çывхараť. Шăналăка перĕнме шикленсе ђылайђђен çĕççине çутатса пăхкаласа тăраť. Тавралла пăхкаласа, шăналăк хĕррине йерипен çўлелле çĕклесе хăпартаť те, çўлелле çавăрса хурса сарай кĕтессине кайса пытанса ђылайђђен тăраť. Йакур хытă çывăраť.

ÇИТĂР (шăппăн). Çывăраť. Вилнĕ пек çывăраť... Çывăр.... çывăр... ĕмĕр ĕмĕрех çывăр. (Йăпшăнса шăналăк патне пыраť. Йакур çине пăхса тăраť. Çĕççине çўлелле çĕклесе антарма пуçлаť). Ах, пултараймастăп... Ытла та лăпкă, туйми, айăпсăр ыйхăпа çываραť (аллине усса тăраť). Мĕнле... мĕн тăвас... пĕрех хут... (çĕççине хăвăрт çўлелле çĕклет. Йтлет. Çапук хашкаса ђупса пынă сас илтĕнет. Çитăр хăвăрт сарай çунатти хыçне ђупса кайса пытанса тăраť).

Çапук пралукпа ђупса кĕрсе карта урлă хăвăрт сиксе каçса Йакур вырăнĕ патне йерипен, упаленсе, тавралла пăхкаласа пыраť.

ÇАПУК (вырӑн патне çитсен, шӑппӑн). Йакур пиђђе, Йакур пиђђе, тӑрха, тӑр. (Йакур тепӗр айакки çине çавӑрӑнса выртса çывӑраԏ). Йакур пиђђе, тӑрха, тӑр, ну! (Йакур вӑранмасԏ. Çапук Йакура лӑкаԏ). Тӑр ђасрах, вӗсем сана вӗлерме килеççӗ, Йакур пиђђе.

ЙАКУР (ыйӑхлӑ сасӑпе). М-ма... Аа-ах, Мӗн... Кам унта?

ÇАПУК (савӑнӑçлӑн). Епӗ, епӗ, Йакур пиђђе, Çапук.

ЙАКУР. Çапук? (тӗлӗнсе тӑрса лараԏ. Çитӑр сарай çунатти патӗнђе сӑнаса тӑраԏ).

ÇАПУК. Çапук çав, Çапук. Вӗсем... Макарпа Мирун аттене ӗçтерсе ӳсӗртрӗç те, сана çӗçӗпе пусма хушрӗç. Ах, хӑратӑп епӗ, Йакур пиђђе... Атте халех... халех килет вӑл... (Йакур çумне пӑђӑртанса). Сана пусма килет...

ЙАКУР (сасартӑк ӑнланса илсе ура çине хӑвӑрт сиксе тӑраԏ). Пар аллуна, Çапук (Çапук аллине параԏ. Йакур Çапука çӳ̆ле çӗклесе ђуптӑваԏ). Ах, Çапук, сана ку ӗçшӗн тӗнђери ӗçхалӑхӗ нихӑçан манмӗ!

Епӗ сана нимех те калайрас çук. Сан паттӑрлӑхна курса, савӑннипе ђӗлхе-çăвар çыхланђӗ. Нимӗн калама пӗлместӗп... Ах, ах, ах, Çапук! Пар аллуна, Çапук! Пысӑк тав, тав тӑватӑп сана, ах, мӗн каласшӑнђђӗха—Комсомолӑн кӑварлӑ ђӗринђе йалкӑшакан хӗм, сан

ђёрӳ ăшне кёрсе вырнаçса, пётём пусмăрта, тёттёмлёхре хёнхур курса пурăнакан ёçхалăхёшён сотсиалисăм патне илсе кайакан çул çинђи çутă, пилёк çунатлă çăлтăр пултăр! Айта, кайар, Çапук!

Çитăр вёсен çулё çине тухса тăрса, çёççине çёре пăрахаť. Çапукпа Йакур пёр-пёрин çумне пăђăртанса тёлёнсе хытса тăраççё.

ÇИТĂР (Çапукпа Йакур умне ђёркуççи çине тăрса). Каçарăр мана!.. Каçарăр ухмаха! (Йёрет).

Ђаршав.

## 6-мёш КАРТТИН.

СТСЕНА: Ђаршав уçăлсанах, стсенă çинђе тепёр ђаршав тухса тăраť. (Шăналăк карса тусан та йураť ăна). Урăх нимён те çук. Çитăр пёђђенех.

ÇИТĂР. Епёр халђ Çапук, Марине, виççёмёр те колхосра. Йакур колхос правленийён претçетаттёлё. Калама çук аван, тăрăшса ёçлекен çын вăл. Колхоса куçнăранпа пурнăç аванланнăран аванланса пыраť. Выçă ларасси асра та çук. Хамăр пурнăçа хамăр вăйпа кăна, кулаксемсёрех йусама пултарассине пит те аван ăнлантăм епё. Пуринђен те ытларах сирён йулташна, хам ывăла Çапука ђёререн кăмăлласа тав тăватăп (куракансене). Есёр пурте Çапук пек ађасем, çавăнпа та ман сире пёр-икё сăмах та пулин каласа хăварас килет. Сирён аçусем те манашкал ăнланмасăр колхоса кёме-

сĕр тăраççĕ пулсан, вĕсене вĕрентме, каласа ăнлантарма тăрăшăр. Тĕслĕлĕх çывăхри лайăхрах ĕçлекен колхоса илса кайса кăтартăр. Урăх епĕ сире нимех те калаймăп.

Çапук курса ларакансем хушшинҗен иксе тухса стсенă çине ухса тăрат.

ÇАПУК. Йулташсем! Епĕр хамăр аттесем пуçланă ĕçе малалла тăсса пырăпăр. Ĕçхалăхĕн йунĕпе сăрланă йалава нихçан та çĕре ўкме памăпăр. Вăл пирĕн пĕртен пĕр, комунисăм патне çул кăтартса пыракан çулпуçĕ. Епĕр ĕçхалăхĕпҗен тухнă Ленин аҗисем. Çавăнпа та, йулташсем, Ленинла, ĕçхалăхĕн интересне сыхлама кирек хăçан та хатĕр пулар!

Җаршав.

# ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔН

## ÇĔНĔРЕН ТУХНĂ УЂЂЕПНĔКĔСЕМ:

Е. Т. Ванеркке, А. Ç. Оттађкĕн, А. Т. Пыккăв, В. В. Ђерновă. МАЛАЛЛА. Пуквар хыççăн вуламалли кĕкеке. 1931 ç. Хакĕ 40 пус.

Ç. В. Ваççилйĕв. ÇАМРĂК ÇĔРĔÇЛЕКЕН. 1930 ç. Хакĕ 60 пус.

С. П. Горский. ЧУВАШСИЙ ЯЗЫК ДЛЯ ЛИЦ, НЕ ВЛАДЕЮЩИХ ЧУВАШСКИМ ЯЗЫКОМ. 1930 ç. Хакĕ 80 пус.

Алентей. ПОЛИТТĔК ЕККОНОМИЙĔ. 1930 ç. Хакĕ 1 тен. 60 пус.

Ф. Т. Тимофеев. РУССКАЯ ГРАММАТИКА ДЛЯ НАЦМЕНСКИХ ШКОЛ. 1930 ç. Хакĕ 1 тен. 70 пус.

Тимухха Хĕветĕрĕ. ЂĂВАШ ЂĔЛХИНЕ ВĔРЕНМЕЛЛИ КĔНЕКЕ. 1930 ç. Хакĕ 1 тен.

О. А. Антрейĕв. ЙАЛТИ ШКУЛСЕНЂЕ ЙАЛХУÇАЛĂХ ĔÇНЕ ВĔРЕНТЕССИ. Меттотĕк çырăвĕ. 1930 ç. Хакĕ 60 пус.

Ç. Корски, А. Сотниккăв, П. Тарассăвă, М. Никколайĕвă. ЂĂВАШ ИЛЕМЛĔ ЛИТТЕРАТТУРНЕ 5-мĕш ÇУЛ ВĔРЕНМЕЛЛИ ĔÇ КĔНЕКИ. 1931 ç. Хакĕ 40 пус.

**Кĕнекесене илмелли атрĕс:**

Чебоксары, Красная пл., книжный магазин „Новая книга“.

Цена 22 коп.


В. Алагер

СТЕПА ГЕРОЙ. Детская пьеса в 6 картинах

Чувашское Государственное Издательство

Чебоксары 1931 г.